***Элли Юрьева***

Çут çăлтăр витĕр çул курнать тесе
Утас çула çўл тўпере суйлатпăр.
Суйлатпăр та, туссем-тăванăмсем,
Каллех пĕрне-пĕри куçран пăхатпăр.
Камсем эпир, камсем,
Ăçта каятпăр?
Камсем эпир, камсем,
Мĕскер шыратпăр?

Асаттесен йĕрри пурах тесе
Хыçри куна сĕвемлеме тăратпăр.
Тăратпăр та, туссем-тăванăмсем,
Каллех çип çыхланнишĕн тарăхатпăр.
Камсем эпир, камсем,
Ăçта каятпăр?
Камсем эпир, камсем,
Мĕскер шыратпăр?

Çул сылтăм енĕ сулнăклă тесе
Тилхепене сулахая тытатпăр.
Тытатпăр та, туссем-тăванăмсем,
Каллех çĕн сулнăкра куçа уçатпăр.
Камсем эпир, камсем,
Ăçта каятпăр?
Камсем эпир, камсем,
Мĕскер тăватпăр?